2011 çулхи декабрĕн 4-мĕшĕ – РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсене тата ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсене суйламалли кун


# Çĕнтерӳ çулĕ

1930 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тухать

электронлă адрес: print@vurnar.cap.ru

Вăрнар район хаçачĕ

2011 çул чӳк/ноябрь/ уйăхĕн 16-мĕшĕ

юн кун

135/10450/ №

Хакĕ ирĕклĕ


## Ĕçне кура хисепĕ

**Иртнĕ эрнере Шупашкарти оперăпа балет театрĕнче ял хуçалăхĕпе тирпейлекен промышленноçра тимлекенсен професси уявĕ пулнă. Унта район администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Николай Петров ертсе пыракан делегаци те хутшăннă.**



ЧР Ял хуçалăх министрĕ С.Павлов, Вăрнарти аш-какай комбиначĕн генеральнăй директорĕ Ю.Попов, ЧР Президенчĕ М.Игнатьев.

**ЧЫСЛАВ**

Агропромышленность комплексĕнче вăй хуракансене професси уявĕпе Чăваш Республикин Президенчĕ Михаил Игнатьев, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ Михаил Михайловский, ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов саламланă, ĕç çыннисем хăйсен тивĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланăран сĕтел çинчен çăкăр-тăвар таталманнине палăртнă, пысăкрах ӳсĕмсем тума çирĕп сывлăх, нумай вăй-хăват суннă.

Прăсникре кăçалхи ăмăртура мала тухнă предприяти-организацисене, коллективсене, ĕç çыннисене чысланă. «2008-2015 çулсенче Чăваш Республикин агропромышленность комплексне аталантарасси тата ял хуçалăх продукцийĕн, чĕртаварăн тата апатçимĕçĕн рынокне йĕркелесе тăрасси» республика программине пурнăçа кĕртессипе тухăçлă тимленĕшĕн пирĕн район Чăваш енĕн тĕп зонинчи районсем хушшинче пĕрремĕш вырăна тухнă, диплома тата укçан премие тивĕçнĕ.

Паллă агрохолдингсенчен пĕри – Вăрнарти аш-какай комбиначĕ – çулсерен чыс-хисепе тивĕçет. Ял хуçалăх отраслĕнче аталантарассипе тухăçлă ĕçленĕшĕн предприяти Чăваш Республикин тĕп зонинчи районсенчи ял хуçалăх организацийĕсем хушшинче мала тухнă, укçан премие тивĕçнĕ.

Агропромышленность комплексне аталантарассипе килти хушма хуçалăх тытакансем те тĕллевлĕ тăрăшаççĕ, выльăх-чĕрлĕх хисепне ӳстерсе пыраççĕ, сĕт, аш-пăш туса илеççĕ. Хастар çынсенчен пĕри – Пăртасра пурăнакан Николай Лукич Лукин. Вăл 10 ĕне, 7 пăру, пĕр вăкăр усрать. Ăна уявра Чăваш Республикин ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотипе чысланă.

Уявра «Ялăн 2013 çулчченхи социаллă аталанăвĕ» программăпа килĕшӳллĕн ялтă тăрăхра çурт-йĕр çавăрма субсиди уйăрни çинчен свидетельство панă. Пулăшу илнисенчен пĕри – Карл Маркс ячĕллĕ кооперативра тимлекен Ольга Григорьева доярка.

Агропромышленность комплексĕнче тăрăшакансене «Çавал», «Чăваш ен» ансамбльсем, Чăваш ен симфони капелли концерт кăтартса савăнтарнă.

Е.ТОЛСТОВА.

## Президент Çырупа тухнă

**Чăваш Республикин Президенчĕ Михаил Игнатьев ĕнер, чӳк уйăхĕн 15-мĕшĕнче, Чăваш ен Патшалăх Канашне тата халăх патне «Пĕтĕмпех çын валли тата çыншăн» Çырупа тухнă.**

ЧР Президенчĕн тĕп политика документĕнче – республика аталанăвĕсене, пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтăвĕсене хаклани. Унта Правительствăн, Патшалăх Канашĕн, влаçăн вырăнсенчи органĕсен, предприяти-организацисен кĕске тата нумай вăхăтлăх ĕç программисенчи приоритетсене палăртнă.

Тĕп ыйтусем – экономикăпа социаллă пурнăçа аталантарасси, çĕнĕ технологисене пурнăçа кĕртесси.

Президент тухса каланин тĕп саманчĕсене «Раççей радиовĕпе» ноябрĕн 16 тата 17-мĕшĕсенче 13 сехет те 30 минутра, «Россия-24» Раççей информаци каналĕпе ноябрĕн 22-мĕшĕнче 19 сехет те 30 минутра, «Россия-1» телеканалпа ноябрĕн 17-мĕшĕнче 9 сехетре, ноябрĕн 20-мĕшĕнче 10 сехет те 20 минутра итлеме-курма пулать.

## Çамрăк çемьесене – патшалăх пулăшăвĕ



**Çамрăк çемьесене хумхантаракан чи кăткăс ыйту – çурт-йĕр. Çемьен йĕркеллĕ те хăтлă условисенче пурăнма хăйĕн кĕтесĕ пулмаллах. Анчах рынок саманинче хаксем пĕрмаях ӳснĕ вăхăтра çамрăксенчен чылайăшĕ мăшăрланнă хыççăн çурт хăпартасси е хваттер туянасси çинчен ĕмĕтленеймест те. Шалуран темиçе пин тӳлесе ют хваттерте пурăнса та хăвăн çурт-йĕре туянма вуншар çул укçа пухма тивĕ. Çамрăк çемьен вара ача-пăча çуратса ура çине тăратмалла, вĕрентмелле...**

**ÇУРТ-ЙĔР**

Çавăнпа çамрăк мăшăрсене пурнăçри пĕрремĕш утăмсене тума нумай ача çуратса пысăк çемье йĕркелеме пулăшас, хавхалантарас тĕллевпе çĕршывра патшалăх шайĕнче тĕрлĕ мерăсем йышăнчĕç. Тавăрса памалла мар субсидисем, çăмăллăхлă кредитсем, нумай ачаллă çемьесем валли çурт-йĕр лартасси тата ытти те – патшалăх пулăшăвĕ пур енлĕ.

Çемьесем хăйсемшĕн лайăхрах пулăшу тĕсне суйлама пултараççĕ. «Çурт-йĕр» федераллă тĕллевлĕ программăн «Çамрăк çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтерессипе» çумпрограмма 2002 çултанпа ĕçлет. Çак тапхăрта республикăра кăна çĕршер çемье çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма пултарнă. Тĕнчери экономика кризисĕ хуçаланнă вăхăтра пулăшу калăпăшĕ пĕчĕкленнĕ пулсан, кăçал унăн виçи курăмлă. Районта акă ку çумпрограмма йĕркипе кăçал 33 çам-

4 стр.




*19 ноября 2011 года*

Чувашская республиканская общественная организация **"Землячество вурнарцев "ТУСЛĂХ"** приглашает Вас на вечер встречи и отдыха с земляками.

Встреча состоится в ДК им.Я.Ухсая (рядом с Домом Правительства) г. Чебоксары

**Начало в 12 час. 00 мин.**

*Совет Землячества.*


**ÇАНТАЛĂК**

| Кĕçнерни кун 17.11 | Эрне кун 18.11 | Шăмат кун 19.11 |
|---|---|---|
| -7 | -9 | -7 |
| -2 | -2 | -10 |

«Метеоновости» информаци агентствин информацийĕ тăрăх.

**Районти «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçата 2012 çулăн пĕрремĕш çурри валли çырăнтармалли тапхăр пырать. Хаçат хакĕ унчченхи пекех: почта уйрăмĕсенче – 187 тенкĕ те 80 пус, редакцие килсе илмелле – 110 тенкĕ.**

# Куҫ курманнисем те компьютер ӗмӗрӗнчен юласшӑн мар

## Республикӑра сусӑр ҫынсене пур енлӗ аталантарас енӗпе тӗрлӗ социаллӑ программӑсем ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсенчен пӗри – ку категорири ҫынсене те компьютер ӗмӗрӗпе тан утма майсем туса парасси

Куҫ курманнисен Вӑрнарти обществин председателӗ Галина Мясникова акӑ, нумаях пулмасть компьютер вӗренӗвӗ енӗпе республикӑри общество ирттернӗ конкурсра II степеньлӗ диплома тивӗҫнӗскер, ҫакнашкал проектсене хамӑр республикӑра та ҫапла хӑвӑрт ҫул парассине малтанласа ӗненме те пултарайман. «2005 ҫулта эпӗ куҫ курманнисене реабилитацилекен Волоколамскри центрта квалификаци ӳстертӗм. Компьютерпа манӑн ун чухнех ӗҫлеме вӗренес килетчӗ. Анчах та ялта пурӑнаканскер, хуҫалӑх тытаканскер, ҫак ӗмӗт ман валли мар тесе шутлаттӑм», – пытармасть вӑл.

Анчах пурнӑҫ пӗр вырӑнта тӑмасть. 2010 ҫулта Пӗтӗм Раҫҫейри куҫ курманнисен республикӑри обществи «Тӗнчене илсе тухакан чӳрече: ялӑх куракансене компьютерпа вӗрентесси» социаллӑ проектпа грант ҫӗнсе илет. Укҫа-тенкӗ пулӑшӑвӗпе компьютер класӗ йӗркелет, куҫ курманнисем валли ятарлӑ программӑсемпе тивӗҫтерет. Кӑҫалхи ҫул пуҫламӑшӗнче ун алӑкӗсем пӗрремӗш пилӗк вӗренекен валли уҫӑлаҫҫӗ.

Ҫулталӑк тӑршшӗпе 95 сусӑр хӑйӗн пӗлӗвне ӳстерӗ. Вӑл шутра куҫ курманнисен районти обществин председателӗ Галина Мясникова та. «Ҫак проекта ҫул парассишӗн тимленӗ ҫынсене пурне те тав сӑмахӗ калас килет. Вӗсене пула манӑн, ҫавӑн пекех ытти инвалидсен те, ӗмӗчӗ пурнӑҫланчӗ. Курссенче вӗренсе свидетельство алла илтӗм, чи кирли вара – компьютерпа ҫӑмӑллӑн ӗҫлеме вӗрентӗм. Паллах, преподавателе Николай Павлович Парахина питӗ пысӑк тав сӑмахӗ калас килет. Пире, куҫ курманнисене, вӗрентме ҫӑмӑл мар-ҫке. Вӑл, хӑй I ушкӑнри инвалид пулнине пӑхмасӑр, кашни кун Канашран Шупашкара хутларӗ. Анчах та куҫ курманнисен вырӑнти обществинче компьютер оборудованийӗ ҫукки питӗ пӑшӑрхантарать. Кашниннех тӗп хуламӑра ҫитсе вӗренме май ҫук-ҫке», – тет Галина Мясникова.

Ҫапах та вӑл ҫитес вӑхӑтра ку ӗмӗт те пурнӑҫа кӗрессе, куҫ курманнисем вырӑнтах информаци технологийӗсене алла илме пултарасса ҫирӗп шанать.

**С.ЧИКМЯКОВА.**

РЕДАКЦИЕ КИЛНӖ ҪЫРУ

# Пурте пӗлччӗр!

Уравӑшӑн кӑнтӑр енчи уй хапхинчен тухсан пысӑк вольтлӑ электролини еннелле ҫул выртатчӗ. Ӑна тахҫанах сухаласа тӑкнӑ ӗнтӗ, халӗ курӑк ҫитӗнет. Ҫул вырӑнӗнчен хӗвеланӑҫ еннелле, пӗр 150 метрта, электролинирен 50 метрта, Чӑваш Республикин географилле центрӗ вырнаҫнӑ. Хӑй вӑхӑтӗнче центра тригонометрилле вышкӑсем лартса та, аэрофотоӳкерчӗксем туса та тӗплӗ тӗресленӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн топографсем кунта пӑрӑхсенчен виҫкӗтеслӗх туса лартнӑччӗ. Анчах ҫураки вӑхӑтӗнче ӑна механизаторсем плугпа ҫаклатса сӗтӗрсе кайрӗҫ. Тырӑ акнӑ чухне сеялкӑсемпе тата тепӗр ҫӗре куҫарчӗҫ...

Темиҫе ҫул каялла, астӑвасса, депутата суйланма шутланӑ кандидат, пысӑк ертӳҫӗ, Уравӑш ҫывӑхӗнче Чӑваш Республикин географилле центрне ҫирӗплетекен палӑка ҫӗклесе лартма шантарнӑччӗ.

Ялти урамсенче электричество юписен пасынокӗсем йӑваланса выртаҫҫӗ-ха. Темиҫен пуҫтарӑнса ҫав тимӗрбетон юпана хӑть вырнаҫтармалла мар-ши? Хӑма ҫирӗплетсе ҫак вырӑн республикӑн географилле центрӗ пулнине палӑртса ҫырса хумалла. Эпӗ Владивостокра икӗ хутчен пулнӑ – Азипе Европа чиккинче те палӑк ларать. Пирӗн, чӑвашсен, мӗнрен катӑк пулмалла? Ман шутпа, ҫак палӑка ҫӗклесе лартсан, хамӑр республикӑра ҫӗнӗ экскурси маршручӗ уҫма та май пулӗ.

**Виталий ВОРОБЬЕВ,**
**тӑван ен тӗпчевҫи.**

СЫВЛĂХ СЫХЛАВĔ

# Тӳлевсĕр тĕрĕсленĕ

Республикăри клиника больницинчи тухтăрсен бригади Вăрнар районĕнче пулнă. Гастроэнтеролог, ревматолог, онколог, пульманолог, невролог, травматолог чирлĕ çынсене тӳлевсĕрех йышăннă, çак кун тухтăрсем патне 104 çын килнĕ, çав шутран 45-шĕ – чĕрепе чирлекенсем.

**М.ДЕМЬЯНОВА.**



# Çамрăк çемьесене – патшалăх пулăшăвĕ

*(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).*

рăк çемье социаллă тӳлевсене тивĕçет.

Паянхи кун тĕлне 32 çемье свидетельствăсене алла илсе субсидие куçарма банкра 9945,60 пин тенкĕлĕх (çав шутра федераллă бюджетран – 3040,512 пин тенкĕ, республика бюджетĕнчен – 5524,07 пин тенкĕ, вырăнти бюджетран – 1381,017 пин тенкĕ) счетсем уçнă. Вĕсенчен чылайăшĕ патшалăх пулăшăвĕпе усă курнă ĕнтĕ, хăйсен харпăрлăхне илнĕ хваттерсене пурăнма куçаççĕ е ялсенче çĕнĕ çурт хăпартаççĕ. Ыттисем те çитес вăхăтрах свидетельствăсемпе усă курса хăйсен çурт-хваттерĕллĕ пулĕç.

Çамрăк специалистсене ялта ĕçлеме, кунта çемье çавăрса пурăнма хавхалантарас тĕллевлĕ программа та районта лайăх ĕçлет. Патшалăх пулăшăвĕн ку

**2006–2010 çç. çурт хута янă**




тĕсĕпе районта темиçе çул хушшинче вуншар çемье пĕчĕк мар виçеллĕ (çурт е хваттер шутлав хакĕн 70 процентĕ чухлĕ) субсидие тивĕçнĕ. Кăçал акă «Ялăн социаллă аталанăвĕ» федераллă программăн «Çамрăк специалистсемпе вĕсен çемйисене çурт-йĕрпе тивĕçтересси» мероприяти йĕркипе кăçал 6 çемье 2812,42 пин тенкĕлĕх социаллă тӳлев илнĕ (федераллă бюджетран – 2049,09 пин тенкĕ, республика бюджетĕнчен – 361,580 пин тенкĕ, вырăнти бюджетран – 401,75 пин тенкĕ). Çемьесенчен тăваттăшĕ патшалăх пулăшăвĕпе уйрăм çурт лартаççĕ, иккĕшĕ хатĕр хваттер туяннă. Ку программăн «Ялта пурăнакан граждансене çурт-йĕрпе тивĕçтересси» мероприятипе 10 çемье 2481,74 тенкĕлĕх субсидие тивĕçнĕ: çиччĕшĕ уйрăм çурт хăпартма тата виççĕшĕ хваттер туянма.

Çавăн пекех района республика бюджетĕнчен нумай ачаллă çемьесен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма – 2835 пин тенкĕ, тăлăх тата ашшĕ-амăш хӳттисĕр юлнă 12 ачана çурт-йĕрпе тивĕçтерме 8910 пин тенкĕ уйăрнă. Тăлăхсем валли Вăрнарта сакăр хваттерлĕ çурт, Вăрманкас ял поселенийĕнче икĕ уйрăм çурт, Калинино тăрăхĕнче икĕ хваттерлĕ çурт хăпартса параççĕ. Кунсăр пуçне Асăмçырми ял поселенийĕнче пĕр тăлăх валли çурт туяннă.

**И.ЯКОВЛЕВА.**

# На военную службу по контракту

**Отдел военного комиссариата Чувашской Республики по Ибресинскому и Вурнарскому районам проводит отбор граждан на военную службу по контракту, прошедших военную службу, в воинских частях Центрального военного округа:**

**в/ч 90600.** Войсковая часть 90600 дислоцирована в военном городке закрытого типа Рощинский, гарнизон в 30 км от одного из крупнейших городов России, г. Самары.

В войсковой части созданы все условия для прохождения и нормального прохождения военной службы по контракту.

Военный городок полностью автономен, со своей собственной инфраструктурой, жилой фонд из 40 домов современного типа, имеется среднеобразовательная школа на 2,5 тысячи учебных мест, для детей дошкольного возраста два детских садика, пункт междугородней телефонной связи. Три филиала сотовой телефонной связи, комбинат бытового обслуживания, спортивный комплекс.

В Рощинском гарнизоне для военнослужащих и их членов семей имеются отличные спортивные, культурные и досуговые объекты, а именно:

– спортивная база ЦСК – ВВС имеет 50 метровый бассейн, тренажерный и легкоатлетический залы. Различные секции: плавание, штанга, бокс, каратэ, айкидо, шейпинг, баскетбол, волейбол, футбол, а также имеются сауна, бильярд и бар.

– гарнизонный дом офицеров имеет библиотеку на 40 тыс. изданий популярных авторов, кинозал на 650 мест, концертный зал, компьютерный класс, кружки для детей дошкольного и школьного возраста. На базе гарнизонного дома офицеров развернут филиал Самарского Гуманитарного университета, где военнослужащие гарнизона могут получить высшее либо второе высшее образование, без отрыва от исполнения своих служебных обязанностей.

Военнослужащие, поступившие на военную службу по контракту в войсковую часть 90600, размещаются в общежитиях кубрикового типа на три человека. В кубрике имеются шкаф для одежды, душ, умывальник, туалет, сушилка, телевизор. На каждом этаже общежития находится спортивный уголок с тренажерами, комнаты досуга с DVD-проигрывателем, телевизором и музыкальным центром, комнаты бытового обслуживания.

Военнослужащие обеспечиваются:

– ежедневным 3-х разовым бесплатным питанием;

– вещевым имуществом;

– бесплатным медицинским обеспечением, в том числе установление ежегодных компенсаций за санаторно-курортное лечение: оплата проезда военнослужащих и членов их семей к новому месту службы, в том числе выплаты компенсаций за расходы на проезд к месту проведения отдыха и обратно;

– обеспечение жилой площадью по нормам и в порядке предусмотренными законами и иными нормативными правовыми актами РФ;

– выплату компенсаций за поднаем жилья.

– в/ч 28331 – 59 бригада управления штаба ЦВО. Дислоцирована в г. Верхняя Пышма Свердловской области.

– в/ч 65349 – 23 отдельная мотострелковая бригада. Дислоцирована в г. Самара.

– в/ч 61423 – 28 отдельная мотострелковая бригада. Дислоцирована в г. Екатеринбург.

Ежемесячное денежное довольствие для всех этих воинских частей, для военнослужащих по контракту составляет от 10000 рублей, размер премий, выплачиваемых ежеквартально составляет от 25000 рублей.

Также продолжается набор:

В воздушно-десантные войска: 106 ДШД г. Тула. Дислоцируется в городах Тула, Рязань, Наро-Фоминск Московской обл. При собеседовании учитывается желание кандидата, определение ему места службы. Средний размер денежного довольствия от 12000 рублей.

В военно-морской флот: Северный флот – г.Полярный Мурманской обл., Тихоокеанский флот – г.Фокино Приморского края, г.Владивосток Приморского края. Балтийский флот – г.Кронштадт Ленинградской обл., г .Балтийск Калининградской обл. Средний размер денежного довольствия от 30 тысяч рублей.

Требования, предъявляемые к кандидатам: наличие гражданства РФ; возраст от 19 до 30 лет; категория годности «Ф»; образование не менее 11 классов; не имеющие судимости;

– в ВВ МВД РФ: в/ч 3997 г.Чебоксары, средний размер денежного довольствия от 10 до 12 тысяч рублей, в/ч 3025 г.Грозный, Чеченская Республика, средний размер денежного довольствия от 20 тысяч рублей, в/ч 3478 98 дивизий ВВ МВД г.Северск Томской обл., средний размер денежного довольствия от 14 тысяч рублей.

Требования, предъявляемые к кандидатам во ВВ МВД РФ: наличие гражданства РФ; возраст от 19 до 40 лет (граждане, пребывающие в запасе); категория годности «А», «Б»; образование не менее 11 классов; не имеющие судимости.

С января 2012 года размер ежемесячного денежного довольствия будет составлять от 25000 рублей.

**И.ВАСИЛЬЕВА,**
**начальник внештатного отбора граждан на военную службу по контракту.**

# Ты вся

Ты вся состоишь из желанья.
Ты вся состоишь из любви.
И я от тебя запылаю –
Ты только меня позови.
Пока состоишь из стесненья,
Что хочешь, пока что – внутри.
Но я приложу все уменье –
От радости только замри.
Мне всю тебя сразу не надо,
Сегодня – лишь каплю отдай.
Ты рядом – и это награда.
В руках моих медленно тай.

* * *

Обжигаешь, обжигаешь,
обжигаешь
Только взглядом.
Я желаю, ты желаешь
Быть со мною нынче рядом.
Может надо, может надо,
Просто надо
Улыбнуться,
Полетать и в бездну падать...
И не хочется проснуться.
Ты со мною, ты со мною,
ты со мною,
Дорогая,
Будь такой же ты земною,
Как листок в начале мая.

* * *

# Денежки

Вкуси плоды труда чужого:
Веди лишь денежкам учет.
Плати, и механизм твой снова
Продолжит счастия отсчет.
Невзгоды, беды, перемены:
Веди лишь денежкам учет.
Держи хоть лиры, хоть тумены –
Продолжишь счастия отсчет.
Все на Земле сегодня тленно:
Веди лишь денежкам учет.
Тогда все будет неизменно –
Продлится счастия отсчет.

**СерШ.**